«Пирĕн пек çынсем ытларах пулни пуриншĕн те лайăх»

П.Т. Терентьев тесенех куç умне Москакассинчи илемлĕ кафе тата унпа юнашар ларакан хитре çуртсем тухаççĕ. Ку вăл паян. Унччен самай тар кăларма тиврĕ-ха унăн. Хăй вăхăтĕнче вара Элĕк районĕнче çуралса ӳснĕскер, хăçан та пулин предприниматель пулатăп тесе шутламан та пулĕ. Ку ĕçрен чылай аякра тăракан профессие суйласа илчĕ теха. Вăтам шкул хыççăн Чăваш ял хуçалăх институтне механизаци факультетне вĕренме кĕчĕ. Каярахпа заочно майпа Мускаври ял хуçалăх производствин институтĕн инженерипе педагогика факультетне пĕтерчĕ. Вăрнарти совхоз-техникумра ял хуçалăх валли кадрсем хатĕрлерĕ, унти вĕрентӳпе курс комбиначĕн директорĕнче те ĕçлерĕ. Муркаш районĕнче пурăнакансем вара ăна Калайкасси шкулĕнче учительте ĕçленĕрен пĕлетчĕç малтан. Унта ачасене çар ĕçне вĕрентрĕ вăл.

– Предприниматель пуласси вăл ман юнрах пулнă пулĕ, – тет паян Петр Терентьевич. Хăйсен раттин 8 сыпăкне тĕпченĕскер, пулнах пулĕ çав унта хăй йышшисем.

Калайкасси шкулĕнче ĕçленĕ чухне вăл махорка çитĕнтерсе сутса пăхрĕ-ха – пăрахрĕ. Çав юнра пурри вара ăна каярахпа пӳрт лартма пулăшрĕ.

– Ыхра çитĕнтерсе çурт лартрăмăр, – аса илет вăл паян кун пирки. – Пирĕн хыççăн çур ял аппаланма пуçларĕ çак ĕçпе. Каярахпа çырла çитĕнтерсе сутни те çемье бюджетне самай пуянлатма май пачĕ.

Хăвăн ĕç результатне курсан, татах та кăмăл çĕкленет иккен. Элĕкре хăй вĕрентнĕ çамрăкпа тĕл пулни ăна çирĕп шухăш тытма пулăшрĕ. Лешĕ ку вăхăта предприниматель пулса тăнăччĕ ĕнтĕ. Ял хуçалăх продукцийĕпе сутă тăватьмĕн.

– Уç эс те хăвăн ĕçне, – сĕнчĕ хайхискер.

Вулакансем астăваççĕ пулĕха районти чи малтанхи предпринимательсене. Вăл вăхăтра ку ĕçе М.В. Васильев, Е.П. Углев, И.И. Пушкин пуçăннăччĕ. Петр Терентьевич та çавсен йышне хутшăнчĕ. Ял халăхĕнчен ял хуçалăх продукцине пуçтарса ăçта кăна çитместчĕ пулĕ: Санкт-Петербургран пуçласа Волгоград, Урал таранах. Санкт-Петербургра, тĕслĕхрен, çĕр улмие сахăрпа улăштаратчĕ. Вăл вăхăтра пасарта Терентьевсăр пуçне никам та сахăр сутман. Волгоградран вара тырăпа таврăнатчĕ. Ăна Етĕрнери спирт заводне паратчĕ те эрех илсе килсе унпа сутă тăватчĕ. Пĕчĕккĕн ĕçлерĕ çапла «Заря» чикĕллĕ яваплăхлă общество.

Халăх предпринимательсене юратсах каймастчĕ çав юхăм пуçланнă чухне.

– Çынсем курайманнинех туйман, анчах пирĕн киоскран хамăр ялсем япала та туянмастчĕç, – тет вăл кун пирки.

Пĕр ялта пурăнакансем вара Петр Терентьевич шухăшлăн утнине час-час куратчĕç:

– Ялан пуçне чиксе утать вăл, – тетчĕç ун пирки.

Шутламасăр мĕн ĕç пултăр. Ял хуçалăх продукчĕсен рынокĕнче пĕр тапхăр конкуренцие чăткаласан, вăл урăх тĕллев тытать:

– Запас пайĕсем сутмалла пуль, – хăй инженер-механик пулнăран, ку хатĕрсем яланах кирлине пĕлет вăл. Çитменнине аслă çул çинчен транспорт татăлмасть. Çул хĕрринчи киоскрах сутма пуçларĕç вĕсене.

Пĕррехинче Волгоградран «пысăк укçапа» таврăнсен, Петр Терентьевич учредительсене уйрăм ĕçлеме сĕнет, пурне те укçа пĕр пек валеççе парать. Кам машина, кам мĕн илчĕ ун чух. Терентьев хăй вара çав суммăна бизнеса аталантарнă çĕре ячĕ. Запас пайĕсем сутакан «Автомиг» магазина хута ячĕç.

1995 çултанпа вара бизнес пĕтĕмпех çемье çине куçрĕ. Малтанах «шкула каялла ĕçлеме кай», текен мăшăрĕ çинче те паян пĕр магазин. Пуçламăшĕнчех ашшĕн шухăшне ырланă ачисем те уйрăм енсемпе ĕçлеççĕ: хĕрĕ кафери ĕçсене йĕркелесе пырать, ывăлĕ çинче – запас пайĕсемпе юсавпа çыхăннă ĕçсем. Хăй вара, Петр Терентьевич, строительство материалĕсемпе, унпа çыхăннă ĕçсене ертсе пырать.

Унтанпа объект хыççăн объект уçалчĕ Терентьевсен. Паян вара «Заря» 10 тĕрлĕ пулăшу парать халăха.

Ялти çынсем пек килте вылăх та усраççĕ. Ара, хăй вăхăтĕнче 7-8 вăкăр усрани мĕнле лайăх пулчĕ. Кафене тем укçипе тумаллаччĕ-ха. Çав вăхăтра «Заря» кредит кооперативне уçса ĕçлеттерни те çаврăнăшри укçапа усă курма май пачĕ. Кафене 2006 çулта хута ячĕç.

Паян вара «Заряра» пĕтĕмпе 60 çын ĕçлет.

– Учитель ĕçне пăрахнăшăн кулянмастăр-и? – ыйтатăп унран.

– Эп паян та учитель, – тет вăл кулса.

Чăннипех те, ун патĕнче ĕçлекенсенчен ытларахăшĕ – хăй вĕрентнĕ çамрăксем.

– Планерка ирттерсе вăхăта сая ямастăп. Кашнинпе уйрăммăн калаçатăп.

Лешсем вара ун пирки çапла калаççĕ:

–Вăрçмасть вăл, анчах эпир унран шикленетпĕр.

Кăмăлĕ çирĕп çав Петр Терентьевичăн. Анчах та специалистсене питĕ хаклать.

– Çак коллектива сыхласа хăварасшăн, – тет вăл. –Пултарулла специалистсем пур, ĕçлесе илччĕрех.

Премине те шеллемест. Ахальтен мар ĕнтĕ малтан урăх системăра ĕçленĕ пĕр специалист çапла калана ĕç укçи илнĕ хыççăн:

– Ку йăлтах мана-и?

Дисциплина çирĕп вара «Заря» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра. «Çуттине» хуçа хăй те юратмасть. Кунта ĕçлекенсем те ун çинчен аса та илмеççĕ. Унсăрăн çемье бюджечĕ самай çӳхелме пултарать вĕт.

– 5 çул машинăсăр ĕçлерĕм вĕт, – тет паян бизнес пуçланă вăхăта аса илсе П.Т. Терентьев.

Халĕ вара унăн КамАЗ та пур. Перекет банкĕнчен кредит илсех туянчĕ вăл ăна. Виçĕ ГАЗ-53 автомашина, апат-çимĕç турттарма виçĕ «Фольксваген» пур тата тепĕр «Газель».

Паянччен мĕн тунипе лăпланма шутламасть Петр Терентьевич.

– Пушă ларакан çурта арендăна илсе, ял хуçалăх продукчĕсенчен апат-çимĕç хатĕрлеме пуçлас шухăш пур, – паллаштарать хăй ĕмĕчĕпе.

Ĕмĕчĕ пурнăçланатех пулĕха. Хăй калана тăрăх, характерĕ унăн вăйлă, пуçланă ĕçе вĕçлемесăр чарăнмасть.

Унтан çапла хушса хурать:

– Пирĕн пек çынсем ытларах пулни пирĕншĕн пуриншĕн те лайăх çеç.

Тĕрĕс калать вĕт?

Л.ПАВЛОВА.

Цифрăлла çыхăну хута кайрĕ

«Волгателеком» уçă акционер обществин Муркашри линипе техника участокĕн пуçлăхĕ Виктор Александрович Терехин хăйĕн савăнăçне пытараймасть. Анланмалла ăна. Пĕтĕм районĕпех цифрăллă телефон çыхăнăвне хута ярса пĕтернĕ-çке. Район центрĕнчипе пĕрле шутласан, 24 автоматла телефон станцийĕнче çĕнĕ çыхăну мелĕпе усă курма тытăннă. Пĕтĕмпе 4800 абонент. Çитменнине графикпа çак ĕçсене март уйăхĕнче вĕçлеме пăхнă пулсан, çине тăнипе февралĕн 23-мĕшĕ тĕлнех çĕнĕлĕхе ĕçе кĕртме пултарнă.

– Çĕнĕлĕхĕн усси мĕнреха?– ыйтса тĕпчетĕп эпĕ унран.

Виктор Александрович хаваспах паллаштарать вĕсемпе:

– Унченхипе танлаштарсан, чи малтанах çыхăну, каласу пахалăхне палăртмалла. Çыхăну хăвăртлăхĕ палăрмаллах ӳсет. Калăпăр, абонентăн Шупашкарпа çыхăнмалла пулсан, унччен «8» цифра çавăрнă хыççăн пĕр вăхăт вăрăм сасă илтĕнме тытăниччен кĕтсе тăмаллаччĕ пулсан, халĕ ун пекки çук. Цифрăлла программăлла АТС валли ятарлă пӳлĕм те кирлĕ мар, калăпăшĕпе вăл пысăк мар. Унпа усă курни электроэнергие чылай перекетлеме май парать. Компьютер пулсан кирек кам та хăйĕн абонент номерĕнчен Интернета тухма пултарать. Çыхăну линийĕсене пĕтĕмпех компьютер урлă тĕрĕслесе пăхса тăраççĕ.

– Ытти районсенче ку тĕлĕшпе лару-тăру епле-ха тата?

– Эпир ку ĕçе республикăра чи малтан вĕçленисен шутĕнче. Пирĕнсĕр пуçне 3–4 районта кăна цифрăллă çыхăнăва пĕтĕмпех йĕркелесе çитернĕ. Ку ĕçе пуçăннисем пур, пачах пуçăнманнисем те çук мар. Çĕнĕ йышши çыхăнăва хута ярассипе уйрăмах иртнĕ çулталăк вĕçĕнче çине тăрса ĕçлерĕмĕр. Ноябрь–декабрь уйăхĕсенче Ярославкăри, Юнкăри, Мăн Хураçкари, Тренккăри, Мăн Сĕнтĕрти АТС-сенче çĕнĕ оборудовани-сем вырнаçтарса хута ятăмăр. Çак кунсенче вара Муркашри линипе техника участокĕнче те цифрăллă çыхăну ĕçлеме тытăнчĕ.

Виктор Александровича татах тепĕр ыйту çине хуравлама ыйтатăп:

– Ку çĕнĕлĕх телефонпа усă кураканcене пырса тивмĕ-и, уйăхсерен тӳлекен абонент тӳлевĕн виçи ӳсмĕ-и?

– Çук-çук, ăшă кулăпа хуравлать вăл, шикленме кирлĕ мар.

Виктор Александровича манăн ыйтусем çине хуравлама кăмăл тунăшăн тав туса унăн ĕç пӳлĕмĕнчен тухатăп.

В. ШАПОШНИКОВ.

Сăн ӳкерчĕкре: электроçыхăнăвăн тĕп инженерĕ Виталий Анатольевич Рыжков (çыхăну ĕçĕнче 31 çул) тата электроçыхăнăвăн инженерĕ Татьяна Николаевна Пикузова (çыхăну ĕçĕнче 10 çул) çĕнĕ оборудование йĕркеллĕ пăхса тăраççĕ.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Район тивĕçнĕ наградăсем

СССР наградисем

1978 çул

Производство эффективлăхне тата ĕç пахалăхне ӳстерессишĕн, 1977 çулхи халăх хуçалăх планне ăнăçлă пурнăçлассишĕн пынă Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăва хутшăнса чи пысăк кăтартусем тунăшăн района КПСС Тĕп Комитечĕн, СССР Министрсен Совечĕн, ВЦСПСăн тата ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă.

1984 çул

Вылăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарассишĕн, 1983-1984 çулсенчи хĕллехи тапхăрта продукци туса илессине тата хатĕрлессине ӳстерессишĕн пынă Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăва хутшăнса чи пысăк çитĕнӳсем тунăшăн района КПСС Тĕп Комитечĕн, СССР Министрсен Совечĕн, ВЦСПСăн тата ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн Хиседн грамотипе наградăланă.

1987 çул

СССР экономикипе социаллă пурнăçне аталантармалли 1986 çулхи патшалăх планне ăнăçлă тултарнăшăн КПСС Тĕп Комитечĕн, СССР Министрсен Совечĕн, ВЦСПСăн тата ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă.

ЧАССР наградисем

Района КПСС Чăваш обкомĕн, Чăваш АССР Министрсен Совечĕн, профсоюзсен облаç совечĕн тата ВЛКСМ обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата 1-мĕш степеньлĕ диплом панă:

1985 çулта - социализмла ăмăртура тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн;

1985 çулта – суту-илӳ ĕçне лайăх йĕркеленĕшĕн;

1986 çулта – пурăнмалли çурт-йĕр тата культурăпа социаллă объектсем тăвас енĕпе вун иккĕмĕш пилĕк çуллăхăн экономикăпа социаллă аталану планĕсене ăнăçлă тултарнăшăн;

1989 çулта – ял пурнăçне çĕнетсе улăштарнăшăн.

1987 çул. Социализмла ăмăртура пысăк кăтартусем тунăшăн, пилĕк çуллăх заданисене ăнăçлă пурнăçланăшăн 1986 çул итогĕсем тăрăх района 12-мĕш пилĕк çуллăх çĕнтерӳçисен республикăри Хисеп кĕнекине кĕртнĕ.

Района ӳсен-тăран тата вылăх-чĕрлĕх отраслĕсенчи ӳсĕмсемшĕн КПСС Чăваш обкомĕн, Чăваш АССР Министрсен Совечĕн, профсоюзсен облаç совечĕн тата ВЛКСМ обкомĕн «Хастар ĕçшĕн» дипломне 1974, 1975, 1978, 1979, 1982, 1983, 1984, 1985, 1986, 1987, 1988 çулсенче панă.

Район тантăшĕ

Ялти пек мар çирĕп кил-çуртлă кермен пек хуçалăх умĕнче тăратăп. Алăк айĕпе каçса кайсах йытă вĕрет. Пĕчĕк пулсан та йытă йытах – пĕр чăрмавсăр кил хушшинелле ирттермест. Унран иртсе пӳрт алăкне уçрăм та çулсенчи хĕрарăм тăрăшсах кăмака умĕнче турчăккапа та ухватпа ĕçленине асăхрарăм. Тӳрех ăнлантăм: ку эпĕ шыранă Нина Арсентьевна Троицкая. Вырăс кăмаки умĕнчи хĕрарăмăн вăр-варлăхĕ унăн ĕçченлĕхне мана тӳрех кăтартрĕ.

... Паспорт çине пăхсан район йĕркеленес умĕнхи кун çуралнăскерне пĕрре пăхсах 65 çул ниепле те параймастăн. Анчах гражданинăн тĕп документчĕ манăн иккĕленĕве айккинелле сирчĕ. Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Шуркасси ялĕнче пурăнакан Нина Арсентьевна Троицкая **(сăн ӳкерчĕкре)** çак кунсенче чăнах та 65 çул тултарчĕ. Çăмăл пулнă-и çак вăхăт? Ку ыйту çине манăн çĕнĕ пĕлĕшĕм пĕр енлĕ хуравламасть паян.

– Пирĕн вăхăтри ачасем – вăрçă çулĕсен ачисем. Ăçта унта çăмăллăх? Сас паллисемпе паллашиччен ĕçе кӳлĕнтĕмĕр эпир. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчен аманса таврăннă атте 1947 çулта çĕре кĕнине те астумастăп. Çавăнпа аттесĕрех çитĕнсе пурнăç çулĕ çине тухма тиврĕ. Крахмал пуçтарса мăян икерчи пĕçерсе ӳсрĕмĕр эпир: пиччĕ, шăллăм тата эпĕ. Миша пиччĕ тăван килте Иштерекре, Вова шăллăм, шахтăна ĕçлеме кайнăскер, Украинăра пурăнаççĕ. Çапла сапаларĕ пире пурнăç. Манăн ачалăхăм вара аннепе пĕрле кĕтӳ кĕтсех иртсе кайрĕ. Çавăнпах тăранса пурăнса, – куççуль витĕр аса илет 65 çулхи кинемей.

Ачаллах ĕçре пиçĕхсе ӳснĕ хĕре 19 çула çитсен Шуркассинчи ял платникĕ Валерий Влассович çураçать. Килĕштернĕ, юратнă çамрăксем пĕр çемье çавăраççĕ те хăйсене валли çурт тума пуçлаççĕ. Кун юлмасăр платникре те, строительсен бригадин бригадирĕнче те вăй хунă арсын кил хуçалăха самантлăха та манмасть. Кĕçех хуралтăсен пĕр пайĕ çĕнелет, анчах... Икĕ ача (ывăлпа хĕр) ашшĕ 1970 çулта сарăмсăр пурнăçран уйрăлса каять. Мĕн тумалла? Мĕн ĕçлесе ачасене пурнăç çулĕ çине кăлармалла? Çĕр çывăратман çак шухăшсем çамрăк хĕрарăма. Вара çак çулхинех Нина Арсентьевна «Герой» хуçалăхăн ĕне фермине доярккăна ĕçлеме каять. Çăмăл мар ĕçе, йывăррăн пулсан та, хăвăрт алла илет ял хĕрарăмĕ.

– Йывăрне-çăмăлне виçсе пайлама вăхăт пулман. Ачасем ӳсеççĕ. Вĕсене çынран катăк çӳретес килмен. Алă уснипе пурнăç пулмасть. Пĕрре кӳлĕннĕ ĕçре кун иртрĕ те çул хыççăн çул хыça юлчĕ. Сисмерĕм те, обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче 29 çул иртсе кайрĕ, – пурнăçланă ĕçшĕн пит хĕретме çуккине асăрхаттарса каласать Н. Троицкая.

Ĕçе чунĕпе парăннă доярккăна вăхăт иртнĕ май техник-осеменатора вĕрентсе кăларса çак ответлă тивĕçе шанса параççĕ. Кунта та Нина Арсентьевна пĕр пăркаланмасăр 15 çул ĕçлет. Пенсие тухас умĕн вара хăй ĕç вырăнне çамрăксене парса, район тантăшĕ сурăх фермине ĕçе куçать.

– Ниçта та ĕç йывăр тесе алă усса ларман, никама та шанман. Техник-осеменаторта ĕçленĕ чух çулленех уй-хир бригадин ĕçченĕсемпе пĕрле хирте кăшман ани те тытса, купăста та лартса. Пĕр ĕç пурри çитет тесе ларман, ачасене вĕрентмелле те, тумлантармалла та. Район тантăшĕ тесе эпĕ нихăçан та шутламан. Паян пĕрремĕш илтрĕм. Тавах ырă хыпаршăн. Апла пулсан хамăн тантăшăм Есений Михайлов та район тантăшĕ пулать, – терĕ хăй çинчен мар, кӳрши пирки шутлассине ĕмĕрĕпех мала хунă Нина Арсентьевна Троицкая.

Çулсем самай пулсан та, пирĕн ветеран лăпалса ларматсть. Килте ывăлĕпе тата кинĕпе, 3 мăнукĕпе ĕне, икĕ тынашки, вăкăр, 3 сысна, чăхчĕп, кăвакалсем çу каçарнă. Ĕçлемесĕр малашлăх çук. Амăшĕн çак чăнлăхне ачисем те çилпе вĕçтермеççĕ. Кавча кайнă хĕрĕ – Надежда – учительница. Çар службине Афганистанра ирттернĕ ывăлĕпе Валентинпа унăн мăшăрĕ Ирина тата вĕсен ачисем – Кристина, Катя, Настя – амăшĕн, хуньамăшĕн тата асламăшĕн ĕçне килтех малалла тăсаççĕ. Хĕрĕпе кĕрĕвĕн 4 ачи те – кукамăшĕн ялан кĕтнĕ хăнисем.

А. БЕЛОВ.

Юбилей

Саламлатпăр

Йӳçкасси ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан **Клавдия Александровнапа Егор Григорьевич ГРИГОРЬЕВСЕМ** мăшăрланса çемье çавăрни февральте 50 çул çитрĕ. Ылтăн туй ячĕпе пирĕн хаклăран та хаклă, юратнă çыннăмăрсене ăшшăн саламлатпăр.

Тавах сире ытарайми ырă кăмăлăршăн, тараватлăхшăн. Юбилей ячĕпе саламласа сире вăрăм кун-çул, вăй-хăват, канлĕ ватлăх сунатпăр. Сĕтел çинчен çăкăр-тăвар ан татăлтăр, чир-чĕр сирĕн айккипе иртсе çӳретĕр. Турри сире нихăçан та ан пăрахтăр. Тайма пуç сире.

Саламлаканĕсем: аппăшĕпе йыснăшĕн, йăмăкĕпе шăллĕн çемйисем, çывăх тăванĕсем, кӳршисем.

Ятман ялĕнче пурăнакан **Виктор Михайлович ПРИЕМОВ** мартăн 1-мĕшĕнче 55 çул тултарать. Ăна юбилей ячĕпе чунчĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăй-хăват, мĕн пур ыррине кăна сунатпăр.

Çав кунах ывăлĕ Миша 18 çул тултарать, ăна вĕренӳре, ĕçре ăнăçу, яланах çирĕп сывлăх сунатпăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, хĕрĕ, кĕрӳшĕ, пĕчĕк мăнукĕ Иосиф.

Пирĕн юратнă анне, кукамай, асанне – Москакасси ял администрацине кĕрекен Ситуккасси ялĕнче пурăнакан **Галина Александровна ГРИГОРЬЕВА** февралĕн 25-мĕшĕнче 80 çулхи юбилейне паллă турĕ.

Хаклă аннеçĕм, эсĕ пире пурнăç парнелесе ура çине тăратрăн, çирĕп сывлăхлă ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларма вăй-хална шеллемерĕн, яланах ырă канашсем патăн. Санăн ырă кăмăлу, чун ăшши пире кунсерен вăй-хăват парса, çунат хушса тăраççĕ. Ку вăл пирĕншĕн иксĕлми телей. 40 çул ытла тăван колхозра ĕçлесе, эсĕ яланах тăрăшуллă пулнипе, ĕçченлĕхпе палăрса тăтăн. Паян та çулусене пăхмасăрах эсĕ вăр-вар та хастар. Кирек хăçан та ачусене хавхалантарса пулăшса пыратăн. Сана сумлă юбилей ячĕпе саламласа нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр тата çĕр çинчи мĕн пур ырă япала пурте сана валли пултăр.

Саламлаканĕсем: ачисем, кинĕ, кĕрӳшĕсем, 12 мăнукĕ, 7 прамăнукĕ, йышлă тăванĕсем.